# Чăваш чĕлхинчи глаголсен сăмах пулу йăвисем

*Е.А. АНДРЕЕВА, филологи наукисен кандидачĕ*



**Андреева Евдокия Александровна** Муркаш районĕнчи Атапай ялĕнче 1958 çулта çуралнă. Хальхи вăхăтра И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче ĕçлет. Чăваш филологи факультечĕн деканĕ, чăваш чĕлхи тата ăна вĕрентес меслетлĕх кафедрин доценчĕ. Вĕренӳ кĕнекисен, чăваш чĕлхине вĕрентес методикине халаллана, сăмах пулăвне тĕпчесе çырнă наука ĕçĕсен авторĕ.

Сăмах пулăвне юлашки çулсенче чĕлхе наукин хăйне уйрăм пĕр пайĕ пек тĕпчеççĕ. Чăваш чĕлхинчи сăмах пулăвĕн ыйтăвĕсене ку таранччен е лексикологире [3], е морфологире [5, 8] пăхса тухнă, хальхи вăхăтра вара ăна пайăррăн тĕпчес туртăм вăйланса пырать.

Чăваш чĕлхинчи сăмах пулăвĕн мелĕсенчен чи тухăçли – тĕп çумне аффикс хушăнса çĕнĕ сăмахсем пулни. Ку мелпе пулнă сăмахсене тĕпчени тĕрлĕ ĕçсенче тĕл пулать [4, 5, 8]. Сăмах пулăвĕн ыйтăвĕсене тĕпчесси чăвашсен паллă чĕлхеçинчен Н.И. Ашмаринтан пуçланать [4]. Вăл хăйĕн ĕçĕнче пĕрремĕш хут япала ячĕсем, глаголсем тăвакан аффикссене туллин çырса кăтартнă. Ун хыççăн Т.М. Матвеев, Н.А. Андреев, В.Г. Егоров, А.Е. Горшков, И.П. Павлов, Л.П. Сергеев, М.Р. Федотов, Л.С. Левитская тата ытти тĕпчевçĕсем сăмах пулăвĕн хăш-пĕр ыйтăвне тишкернĕ. Чăваш чĕлхинчи аффикс хушăнса пулнă сăмахсене тĕпчесе çырнă ятарлă ĕçсем те пур [1, 2, 6, 7].

Ку таранччен кун çути курнă тĕпчев ĕçĕсенче сăмах тăвакан аффикссен пулăвне, вĕсен тухăçлăхĕпе тухăçсăрлăхне, пулăннă сăмахсемпе пулăнтаракан сăмахсен пĕлтерĕшне тата ытти хăш-пĕр ыйтусене пăхса тухнă. Сăмах пулăвĕн комплекслă единицисене ку таранччен чăваш чĕлхи пĕлĕвĕнче ятарлă никам та тĕпчемен.

**Сăмах пулăвĕн комплекслă единицисем** шутне сăмах пулăвĕн йăвисем, сăмах пулăвĕн парадигмисем, сăмах пулăвĕн речĕсем, сăмах пулăвĕн мăшăрĕсем кĕреççĕ.

Сăмах пулăвĕн йăвисен тытăмне, вĕсенчи иккĕмĕшле сăмахсен пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсене пуринчен маларах вырăссен паллă чĕлхеçи А.Н. Тихонов тишкерсе пĕтĕмлетнĕ, çав вăхăтрах вăл тĕрĕк чĕлхисенче те комплекслă единицăсене тĕпчеме вăхăт çитнине палăртнă [9].

Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, **сăмах пулăвĕн йăви** вăл – пĕр тымартан пулнă иккĕмĕшле сăмахсен пĕрлĕхĕ; йăвари сăмахсем пĕлтерĕш енчен пĕр-пĕринпе тачă çыхăнура тăраççĕ, тымар сăмахăн пĕлтерĕшĕ иккĕмĕшле сăмахсенче яланах хăйне евĕрлĕ палăрать.

Сăмах пулăвĕн йăвинчи комплекслă единицăсенчен чи ансатти – **сăмах пулăвĕн мăшăрĕ.** Йăвари мăшăрсен шучĕ иккĕмĕшле сăмахсен шучĕпе пĕр тан пулать, урăхла каласан, йăвара мĕн чухлĕ çĕнĕ сăмах, çавăн чухлĕ сăмах пулăвĕн мăшăрĕ. Сăмахран, *тăк* глагол йăвинче пурĕ сакăр пулăннă сăмах, çавăнпа та сăмах пулăвĕн мăшăрĕсем те саккăр: *тăк – тăкак, тăкак – тăкакла, тăкакла – тăкаклан, тăкаклан – тăкаклантар, тăкак – тăкаклă, тăк – тăкăн, тăк – тăкăнчăк, тăкăн – тăкăнтар.*

Сăмах пулăвĕн мăшăрĕсенчен тепĕр икĕ комплекслă единица йĕркеленет: **сăмах пулăвĕн речĕ** тата **сăмах пулăвĕн парадигми**. Акă *тăк* глаголăн йăвинче çакăн пек сăмах пулăвĕн речĕсем пур: *тăк – тăкак – тăкакла – тăкаклан – тăкаклантар, тăк – тăкак – тăкаклă, тăк – тăкăн – тăкăнчăк, тăк – тăкăн – тăкăнтар.* Çапла вара, *тăк* глаголăн йăвинче тăвată сăмах пулăвĕн речĕ. Хăш-пĕр сăмах пулăвĕн йăвисем пĕр ретрен çеç тăраççĕ, ку ретсем вара сăмах пулăвĕн мăшăрĕпе тан: *çи – çийĕн, сӳ – сӳкĕч.*

Сăмах пулăвĕн йăви – сăмах пулу парадигмисен пĕрлĕхĕ те. Йăвара миçе пулăнтаракан сăмах, çавăн чухлĕ сăмах пулу парадигми пулать. Тĕслĕхрен, *тăк* глаголăн йăвинче пулăнтаракан тĕп вырăнĕнче çак сăмахсем тăраççĕ: *тăк, тăкак, тăкăн, тăкакла, тăкаклан*. Çавăнпа ку йăвара пурĕ пилĕк сăмах пулу парадигми: *тăк – тăкак, тăкăн; тăкак – тăкакла, тăкаклă; тăкăн – тăкăнтар, тăкăнчăк; тăкакла – тăкаклан, тăкаклан – тăкаклантар*. Ытларах чухне пĕрремĕшле сăмахăн парадигми ыттисенчен анлăрах пулать, урăхла каласан, сăмах пулăвĕн пĕрремĕш сыпăкĕнче иккĕмĕшле сăмахсем йышлăрах. Сăмах пулăвĕн йăвинче пĕр е ытларах сăмах пулу парадигми пулма пултарать. Илнĕ тĕслĕхре сăмах пулу парадигмисем – пиллĕк. *Тăк* глаголăн йăвине çакăн пек ӳкерсе кăтартма пулать:

*тăк* → *тăкак* → *тăкакла* →
*тăкăн* → *тăкăнтар*
*тăкăнчăк*

→ *тăкаклан* → *тăкаклантар*

Чăваш чĕлхинче глагол сăмах пулăвĕн йăвинче чи нумайăи 34 сăмах пулма пултарать. Акă *кар* глаголăн йăвинче пурĕ 34 пулăннă сăмах:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| *кар →* | *карав →* | | | |
| | *карӑ I →* | | | |
| | *карӑл →* | | | |
| | *карӑм →* | *карӑмлӑ* | | |
| | *карӑн →* | *карӑнтар* | | |
| | | *карӑнтӑк* | | |
| | | *карӑнчӑк* | | |
| | *каркала →* | *каркалан →* | *каркаланчӑк* | |
| | *каркӑҫ →* | | | |
| | *каркӑч I →* | *каркӑчла →* | *каркӑчлан* | |
| | *каркӑч II →* | | | |
| | *карма →* | | | |
| | *кармак →* | *кармакла →* | *кармаклан →* | *кармаклантар* |
| | | | *кармаклаттар* | |
| | | *кармаклӑ* | | |
| | | *кармака* | | |
| | *картар →* | | | |
| | *кару →* | | | |
| | *кармаш →* | | | |
| | *карта →* | *картала →* | *карталан* | |
| | | *карталӑх* | *карталаттар →* | *карталантар* |

*Кар* глаголӑн йӑвинче сӑмах пулӑвӗн тӑватӑ сыпӑкне курма пулать. Пӗрремӗш сыпӑкри пулӑннӑ сӑмахсем *кар* глаголӑн парадигмине йӗркелеҫҫӗ:

*кар → карав, карӑ, карӑл, карӑм, карӑн, каркала, каркӑҫ, каркӑч I, каркӑч II, карма, кармак, картар, кару, кармаш, карта.*

Ку парадигмӑра пурӗ 15 сӑмах, йӑвари ытти парадигмӑсемпе танлаштарсан вӑл чи йышли. Иккӗмӗш сыпӑкра 11 пулӑннӑ сӑмах, анчах вӗсен пулӑнтаракан тӗпӗсем расна. Тӗслӗхрен, *карӑн* глаголӑн парадигми виҫӗ сӑмахран тӑрать: *карӑн → карӑнтар, карӑнтӑк, карӑнчӑк.*

Иккӗмӗш сыпӑкри ытти парадигмӑсем: *кармак → кармакла, кармаклӑ, кармака; карта→ картала, карталӑх; каркала → каркалан; каркӑч → каркӑчла.* Ҫапла вара, сӑмах пулу йӑвин иккӗмӗш сыпӑкӗнче пилӗк парадигма. Йӑван виҫҫӗмӗш сыпӑкӗнче пулӑннӑ сӑмахсен шучӗ улттӑ, парадигмӑсен вара – тӑваттӑ: *каркалан → каркаланчӑк, каркӑчла → каркӑчлан; кармакла → кармаклан, кармаклаттар; картала → карталан, карталаттар.*

*Кар* глаголӑн сӑмах пулу йӑвинче тӑваттӑмӗш сыпӑкра пурӗ икӗ парадигма, пулӑннӑ сӑмахсен шучӗ те иккӗ: *кармаклан → кармаклантар; карталан → карталантар.*

Йӑвари сӑмах пулу парадигмисене тишкерсе тухнӑ хыҫҫӑн ҫакӑн пек пӗтӗмлетӳ тума пулать: сӑмах пулӑвӗн пӗрремӗш сыпӑкӗнче (пӗрремӗшле сӑмахӑн) пулӑннӑ сӑмахсен шучӗ чи нумаййи, малаллахи сыпӑксенче ҫав хисеп чакса пырать.

Глаголсен сӑмах пулу йӑвисенчи иккӗмӗшле сӑмахсем япала ячӗсем е глаголсем, сайра хутра паллӑ ячӗсем пулаҫҫӗ. Ҫӳлерех илнӗ *кар* глаголӑн йӑвинче 12 япала ячӗ, 17 глагол, 5 паллӑ ячӗ. Тӗслӗхсене танлаштарса пӑхнӑ хыҫҫӑн ҫакӑ паллӑ пулчӗ: глагол сӑмах пулу йӑвинче пуринчен ытларах иккӗмӗшле глаголсем, унтан япала ячӗсем, юлашкинчен вара паллӑ ячӗсем тӗл пулаҫҫӗ.

Глаголсен сӑмах пулу йӑвисенче иккӗмӗшле сӑмахсем тӗрлӗ модельсемпе пулаҫҫӗ. Сӑмах пулӑвӗн моделӗ вӑл – ҫӗнӗ сӑмахсем тумалли евӗр, вӑл пулӑнтаракан тата пулӑннӑ тӗпсенчен, сӑмах тӑвакан аффиксран тӑрать. Тӗслӗхрен: *гл. + -ӑм(-ӗм) = я.я.: карӑм.*

Глагол сӑмах пулӑвӗн йӑвисенче япала ячӗсем ытларах ҫакӑн пек модельсемпе пулаҫҫӗ: *гл. + -ӑ(-ӗ) = я.я.: карӑ, уҫӑ, касӑ; гл. + -ӑм(-ӗм) = я.я.: пӑрӑм, карӑм, тӑсӑм; гл. + -лӑх(-лӗх) = я.я.: пуслӑх, уҫлӑх, путлӑх; гл. + -кӑч (-кӗч) = я.я.: каркӑч, уҫкӑч, пӑркӑч; гл. + -у(-ӳ) = я.я.: выру, вану, пулу; гл. + -кӑн(-кӗн) = я.я.: чупкӑн, таркӑн, каскӑн; гл. + -ӑк(-ӗк) = я.я.: татӑк, хуҫӑк, ҫӗрӗк; гл. + -ӑш(-ӗш) = я.я.: путӑш, сырӑш, уҫӑш; гл. + -мак(-мек) = я.я.: чикмек, катмак, кармак* т. ыт. те.

Глагол сӑмах пулу йӑвисенчи иккӗмӗшле глаголсем ҫак модельсемпе пулма пултараҫҫӗ: *гл. + -ӑн(-ӗн) = гл.: карӑн, ҫырӑн, ҫапӑн; гл. + -ла (-ле) = гл.: кармакла, каркӑчла; гл. + -ӑл(-ӗл) = гл.: хуҫӑл, катӑл, пӑсӑл; гл. + -тар(-тер) = гл.: шантар, шутар, вӗҫтер; гл. + -ӑш(-ӗш) = гл.: пулӑш, супӑш, тупӑш; гл. + -ар(-ер) = гл.: путар, шутар, илтер* т. ыт. те.

Сӑмах пулӑвӗн йӑвисенчи паллӑ ячӗ тӑвакан хӑш-пӗр модельсем: *гл. + -лӑ(-лӗ) = п.я.: карӑмлӑ, кармаклӑ, пӑрӑмлӑ, тӳсӗмлӗ; гл. + -чӑк(-чӗк) = п.я.: карӑнчӑк, пӑрӑнчӑк; гл. + -у(-ӳ) = п.я.: кару, тату.*

Глагол сӑмах пулӑвӗн йӑвисенчи иккӗмӗшле сӑмахсем тӗрлӗ пӗлтерӗшлӗ пулма пултараҫҫӗ:

1) абстрактлӑ пӗлтерӗшлӗ япала ячӗсем: *парӑм, сунӑм, чӑтӑм, канлӗх, сисӗнкӗ, туртӑнкӑ, тупӑш, пӗлтерӗш, чару, шанӑҫ, хурланӑҫ;*

2) ӗҫ хатӗр-хӗтӗрне пӗлтерекен япала ячӗсем: *хиркӗч, хыркӑч, ӑскӑ, уҫӑ, пӑра, катак, чарак, пухмач, чикмек, катмак, сарма, вителӗк, хупӑлча;*

3) пулӑнтаракан глагол палӑртакан ӗҫ хыҫҫӑн пулнӑ япаласен, пулӑмсен ячӗсем: *ӳкерчӗк, пӗрӗнчӗк, шыҫӑ, касӑ, ҫыртӑк, татӑк, кӳлӗм, чӗрме, чӑмлак, чӗрпӗк, пӗрмек, тултармӑш;*

4) пулӑнтаракан тӗп кӑтартакан ӗҫпе палӑрнӑ ятсем: *таркӑн, чупкӑн, аскӑнчӑк, йӗрмӗш, макӑра, карма, касмак, хытӑм;*

5) ӗҫ е процесс ячӗсем: *вану, сикӗ, чупӑ, ӳсӗм, тӑрӑм, вырма;*

6) пулӑнтаракан тӗп кӑтартакан ӗҫпе палӑрнӑ вырӑн ячӗсем: *сулӑнкӑ, сулӑнчӑк, путлӑх, анӑҫ, тухӑҫ, каҫӑ, чикӗ;*

Ҫапла вара, глагол сӑмах пулу йӑвисем тытӑмӗпе тӗрлӗрен, вӗсенче пулӑннӑ сӑмахсен шучӗ пӗрререн пуҫласа вӑтӑр тӑватта ҫитет. Иккӗмӗшле сӑмахсем – япала ячӗсем, глаголсем, паллӑ ячӗсем, вӗсенчен чи йышли – глаголсем. Вӗсем тӗрлӗ модельсемпе пулаҫҫӗ. йӑвари сӑмахсем ытларах ӗҫ хатӗрне, мӗнле те пулин ӗҫпе палӑрнӑ ҫынна, ӗҫ ячӗсене т. ыт. те пӗлтереҫҫӗ.

***ЛИТЕРАТУРА***

1. *Андреев В.В.* Отглагольное именное словообразование в чувашском языке. – Чебоксары: Изд-во ЧГУ, 1987. – 176 с.

2. *Андреева Е.А.* Аффиксальное глагольное словообразование в чувашском языке. – Чебоксары: Изд-во ЧГПУ, 1995. – 157 с.

3. *Андреев Н.А.* Лексикология чувашского языка. – Чебоксары: Чувашск. кн. изд-во, 1961. – 160 с.

4. *Ашмарин Н.И.* Материалы для исследования чувашского языка. – Казань: Типолитография Казанск. ун-та, 1898. – 410 с.

5. *Павлов И.П.* Хальхи чӑваш литература чӗлхи. Морфологи. – Шупашкар: Чӑваш кӗн. изд-ви, 1965. – 342 с.

6. *Орлова А.П.* Глаголы с аффиксом *-лан(-лен)* в чувашском языке. – Чебоксары: Чувашск. кн. изд-во, 1976. – Вып. 66. – С. 149–158.

7. *Орлова А.П.* Образование глаголов с помощью аффикса *-ла(-ле)* // УЗ ЧНИИ. – Чебоксары: Чувашск. кн. изд-во, 1975. – Вып. 59. – С. 123–139.

8. *Сергеев Л.П.* Чӑваш чӗлхи. – Шупашкар: Чӑваш кӗн. изд-ви, 1988. – 326 с.

9. *Тихонов А.Н.* Вопросы теории тюркского словообразования // АПРС. Тезисы V научно-теоретической конференции. – Самарканд: Самарк. кн. изд-во, 1987. – С. 449–451.